Петĕр Хусанкай

## Салтак сăмахĕ

Самана салтакĕ эпĕ:
Пăшалпа е перапа –
Пĕтиччен кун-çул хисепĕ
Хуралта эп тăрапах.

Çăмăл мар салтак кун-çулĕ:
«Çуртăм – çурăм хыçĕнче,
Чунăм – чĕрне вĕçĕнче», –
Тенине эс илтнĕ пулĕ.

Çĕнтерӳ пĕр аслă юрă,
Пĕр уяв пек пуличчен
Тар та юхрĕ, юн та юхрĕ,
Пуçĕпех пĕтни миçен!

Чи таса, илемлĕ, сывă
Ывăл-хĕрччĕ... Мĕн теес?
Çĕлĕк хыв, пуç тай, çĕршывăм:
Çавсемпе çĕнтертĕн эс.

Хаклă хак тӳлерĕн эсĕ
Сыхламашкăн ирĕке.
Е татах çапла тӳлес-и?
Ку ан пултăрччĕ текех.

Пулмĕ ку! Кăвар çунатлăн
Тухрăн эс вутран-кĕлрен,
Çĕнĕрен хăвна çуратнăн
Чунупа та çĕнелен.

Кун-çулне пурăнаймасăр
Сӳннисен ячĕпеле
Ывăлу-хĕру халь харсăр
Çĕкленет тӳпенелле.

Мĕльюншарăн-мĕльюншарăн
Пуç çухатнă çамрăксен
Ячĕсем, çунса кăваррăн,
Сасă паччăр пур енчен:

«Эй, этемлĕх! Пăх та курччĕ,
Ăнлансамччĕ хăвна ху.

Эпĕр – санăн шанчăкуччĕ,
Ĕмĕтӳ, пуласлăху.

Хăçанччен капла ку пырĕ?
Пур вăрçа та чармалли
Пĕр саккун хăçан-ха çырĕ
Хăйшĕн хăй этем алли?»

Эп çакна илтетĕп халĕ
Самана шăв-шавĕнче.
Сăмахне этемлĕх калĕ,
Çавăнта пырать тĕнче.

Ĕçлĕ кун-и е уяв-и, –
Парăм пысăк ман умра;
Яланах ăна туяп эп,
Сас парап хама кура.

Самана салтакĕ эпĕ:
Пăшалпа е перапа –
Пĕтиччен кун-çул хисепĕ
Хуралта эп тăрапах!

1965.

*Хусанкай, П. Салтак сăмахĕ : [сăвă] / Петĕр Хусанкай // Вăрçăра : калавсемпе сăвăсем. – Шупашкар, 1968. – С. 167-169.*